25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
25
КĔÇНЕРНИКУН
146(6081) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЫРĂНТИ ПИЧЕТЕ КУЛЛЕН ЕРТСЕ ПЫМАЛЛА

Халĕ, отечественнăй вăрçă кунĕсенче, выранти пичет уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăма пуçларĕ. Выранти хаçат ĕççыннисемпе, предприятисемпе колхозсен пурнăçĕпе çыхăнса тăрать. Çавăнпа вăл кашни предприятин, колхозăн, совхозăн, МТС-ăн ĕçне лайăхлатас енĕпе пысăк пулăшу пама пултарать.

Пирĕн республикăри пысăк предприятисем май уйăхĕнчи производствăллă программăсене тултарнă çĕрте, районсем тата колхозсем нумайĕшĕ суракине ăнăçлăн вĕçленĕ çĕрте выранти пичет те пысăк ĕç турĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле комбиначĕн цехĕсенче стена хаçачĕсем вăхăтра тухса тăраççĕ. Вĕсенче нормăсене икĕ-виççĕ хут ӳстерсе тултаракан стахановецсен ĕçĕсем çинчен çырнă статьясем, стахановецсен сăнӳкерчĕкĕсем тухаççĕ, малта пыракансен ĕç опычĕсем çинчен çыраççĕ. Пур рабочисем те малта пыракансем пек ĕçлеме ĕненекен статьясен паллă вырăн йышăнаççĕ. Стена хаçачĕсене рабочисем юратаççĕ. Хаçатсенче стахановецсен статьисене курма пулать. Паллах ĕнтĕ, производствăра ĕç мĕнле пулса пынине пĕлсе, кая юлса пыракан бригадăсен малтисемпе танлашмалли çинчен стена хаçачĕсенче çырнине курса, рабочисем ытларах тăрăшса ĕçлеме тытăнаççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисем районри хаçатсене тата стена хаçачĕсене куллен ертсе пынă çĕрте выранти пичет—чăн-чăн коллективлă пропагандист, коллективлă агитатор тата коллективлă организатор пулса тăрать.

Анчах хăшпĕр районсенче, предприятисенче тата колхозсенче хаçат ĕçĕ çине çиелтен пăхни халĕ те пĕтмен-ха. Акă, Шăмăршă районĕнчи «Сталин ялавĕ» хаçата илер. Унта выранти пурнăçа çутатса паракан материалсем сахал пичетленеççĕ. Май уйăхĕн 24-мĕшпе 26-мĕшĕсенче тухнă номерсенче «Пахча-çимĕçсене вăхăтра лартса хăварар» тата «Коммунистсемпе комсомолецсем—суракин организаторĕсем» ятлă статьясене «Чăваш Коммуни» хаçатран касса илнĕ те, хăйсен районĕнчи колхозсен ятне кĕртсе лартса, райхаçат редакцийĕн статьисем пек туса пичетлесе кăларнă. Çав хаçат районри колхозсен ячĕсене те пăтраштарса çырать. Шăмăршă районĕнчи хаçат редакцине ответлăха туйманни çинчен эпир хамăр хаçатра çырнăччĕ. Унтанпа икĕ эрне иртрĕ. Çапах та ВКП(б) Шăмăршă райкомĕ райхаçат редакцин ĕçĕсем çинчен халиччен те сӳтсе-явман.

Калас пулать, ытти районсенчи хаçатсен страницисем çинче те выранти статьясемпе заметкăсем сахал вырăн тупаççĕ, хаçатсен номерĕсем центртан ярса панă материалсемпе тулаççĕ. Çакă вăл—пысăк çитменлĕх пулнине ВКП(б) Центральный Комитечĕ пĕр хут кăна мар кăтартса пачĕ.

Уйрăм предприятисемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем стена хаçачĕсене кăларасси çине çавăрăнса пăхманран, стена хаçачĕсем майăн 1-мĕшĕнчене те тухмаççĕ, колхозри стена хаçачĕсем çураки вăхăтĕнче те пĕрер номер кăна тухнă.

Хальхи вăхăтра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Ăмăрту мĕнле пынине выранти пичетре тăтăшах çутатса пыни—пирĕн ĕçре çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнӳсем тума май панине яланах асра тытмалла. Халиччен те ăмăртăва тухман предприятисем, колхозсем, учреждениссем пирĕн республикăра пур-ха, çавсен коллективĕсене ăмăртăва хутшăнтарас пулать. Пĕр рабочи те, пĕр колхозник те, пĕр служащи те ăмăртăва хутшăнмасăр ан юлтăр.

Лайăх ĕçлекен цехсен, бригадăсен, рабочисен, колхозниксен ĕçĕсем çинчен çырнă статьясемпе заметкăсем валли районри хаçатсенче, уйрăмах стена хаçачĕсенче тивĕçлĕ вырăн пулмалла. Çавăнпа пĕрлех ĕçри çитменлĕхсене, япăх ĕçленине критиклекен материалсем валли те вырăн тупас пулать.

Хаçатра выранти материалсем нумайрах пултăр тесен, корреспондентсен йышне пысăклатас тĕлĕшпе кунран кунах ĕçлемелле. Предприятисенчи, колхозсенчи, МТС-сенчи стахановецсене ĕçялкорсен ретне явăçтармалла. Кашни коммунист, комсомолец хаçат корреспонденчĕ пултăр.

Предприятисем производство программисене тултарасси, колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртесси стена хаçачĕсем йĕркеллĕн тухса тăрса, пурнăçăн пур енĕсене те çутатма пĕлнинчен чылай килет. Çавăнпа та парти организацийĕсен стена хаçачĕсене ертсе пырас ĕçе вăйлатас пулать.

Пирĕн пичетĕн тĕп задачи совет халăхне фашистла Германие хирĕç кĕрешме отечественнăй аслă вăрçа çĕклесси, пирĕн правăсене, пирĕн çĕре, пирĕн тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхлама çĕклесси, совет халăхĕн мĕнпур вăйĕсене Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртме, 1942 çулта нимĕçсен фашистла çарĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкма мобилизацилесси пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 23-мĕшĕнче **Харьков** енче пирĕн войскăсем противникăн наступлени тăвакан войскисене хирĕç çапăçнă. Пирĕн войскăсем кăштах каялла чакса çĕнĕ позицисем йышăннă.

Фронтăн **Севастополь** участокĕнче пирĕн чăçсем противникăн йышлăрах вăйĕсен хаяр атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне, войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 100 çити автомашинине, 38 полевой тата зенитнăй орудине, 13 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, зенитнăй пулеметсен 30 точкине пусарнă, чугунçул çинчи 80 вагона çĕмĕрнĕ, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити тата утлă çар эскадронне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем, пăшалсемпе пулеметсенчен хăватлăн персе, противникăн боевой речĕсене сапаласа янă та, хăйсем контратакăна кĕрсе кайса гитлеровецсене каялла сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 ытла виллисем выртса юлнă. Танксене хирĕç пемелли 4 оруди, 6 пулемет, винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Гвардин старши лейтенанчĕ Устинов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем (Калинин фрончĕ) нимĕçсен артиллери батарейине пусарса лартнă, 75 миллиметрлă орудие, миномета пĕтерсе тăкнă, темиçе дзот çĕмĕрнĕ тата противникăн боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Миляков сержантăн наводчик Горяков, авăрлакан Рябин, установщик Лошаков, подносчик Ломачий красноармеецсенчен тăракан минометнăй расчечĕ нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн разведчиксен кĕçĕн лейтенант Шубин командир пулса ертсе пыракан группи, противникăн шалти тылĕнче кĕрешнĕскер, С. станци районĕнче чугунçул линийĕн участокне минăсем хурса тухнă. Çав минăсем çинче чугунçул тăрăх боеприпассем турттарса пыракан çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Паровоз, вагонсем тата груз пĕтĕм хурал-мĕнĕпех пĕтнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен Лазо ячĕпе тăракан отрячĕ нимĕçсен фашистла чаçĕсене хирĕç 10 кун хушши хаяррăн çапăçнă. Партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити вĕлернĕ, 7 танк, 7 бронемашина тата 16 автомашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансем противникăн чугунçулпа çар снаряженийĕ турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 18 вагон çĕмĕрĕлнĕ, поезда сыхласа пыракан 30 нимĕç вилнĕ, 60 метр хушши чугунçул йĕрĕ арканса пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ унтер-офицерĕ Гельмут Герхольд çумĕнче унăн дневникне тупнă. Герхольд—фашистсен партии членĕ. Вăл 7 çула яхăн гитлерла çарату çарĕнче тăнă. Анчах та Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче çак вутпа шыв витĕр тухнă бандит та кĕселленсе ӳкнĕ, хуйха ернĕ. Аяларахра унăн дневникĕнчен илнĕ уйрăм сыпăксене пичетлетпĕр:

«1942 çулти мартăн 5-мĕш. Тухса каймалли вăхăт çитрĕ... Фронта ĕнтĕ пĕрремĕш хут кăна каймастăп, анчах та хальхинче ман чун тем ырра мар сисет.

Мартăн 12-мĕш. Смоленска çитрĕмĕр... Вăрçă пуçланнăранпах вырăссен фронтĕнче вăрçакан салтаксемпе калаçрăмăр. Пурне те шуйттан пекех йăлăхтарса çитернĕ.

Мартăн 15-мĕш. Вязьмăна тухса кайрăмăр. Хатĕр тăма приказ илтĕмĕр. Кашни минутăрах партизансем тапăнасса кĕтме пулать.

Мартăн 31-мĕш. Çĕрле виçĕ хутчен тревога пулчĕ. Ротăн ирхи операцийĕнче пулманни — манăн телей вăл.

Апрелĕн 1-мĕшпе 2-мĕш. Хам отделенири салтаксене сăнаса тăма интерес пур. Ваттисем ним шарламасăр çӳреççĕ. Çамрăккисем — пысăк хăравçăсем. Вĕсем хăйсем мĕнтери хăрапине те пытарма пултараймаççĕ. Вилес-мĕн пулсан çак салтаксене П. Альфердпа Мазена ман япаласене киле ярса пама ыйтатăп. Укçа, хутаççи, фотоаппарат тата çĕрĕсем хам çумра.

Апрелĕн 3-мĕш. Каялла чакатпăр. Пирĕн взводăн яла çунтарса ямалла. Сарайĕнчен аманнă 3 вырăса туртса кăлартăм. Пĕрне командир патне ятăм, анчах илсе кайнă чухне ăна персе вĕлернĕ. Командир килсен аманнă икĕ вырăса персе пăрахрăм. Вĕсенчен пĕрин мăйĕ витĕр пуля тухса кайнă.

Майăн 16-мĕш. Паян ирхине вырăссем пĕрремĕш ротăн позицийĕсене атакăланă. Вилнисем, аманнисем нумай. Отделени командирĕ пĕр хыпарсăр çухалнă. Малалла та кун пекех пулсан, эпир пурте пĕтетпĕр».

* * *

Юлашки вăхăтра Норвегире чугунçулсем çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тапăнасси сарăлса кайнă. Роа çывăхĕнче икĕ станци хушшинче хĕçпăшаллă норвежецсен ушкăнĕ пассажир поездне чарса лартнă та çав поездпа пыракан темиçе нимĕç офицерне вĕлернĕ. Тронхеймран инçех мар нимĕçсен боеприпассемпе тумтир склачĕ çунса кайнă.

Июнĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтăн Севастополь участокĕнче противникăн пирĕннинчен йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен мотопехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн войскăсем йышăннă халăх пурăнакан пункта атакăланă. Хаяр çапăçусенче пирĕн боецсем нимĕçсен 13 танкне, 3 орудине тата ытти хĕçпăшалне пĕтерсе тăкнă. Противник чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçăн боецĕсем, нимĕç пехотин атакине сирсе пăрахса, противник йышăнса тăнă вырăна çĕмĕрсе кĕнĕ. Штык вĕççĕн тăрса çапăçнă чухне 150 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенне миномет, 6 станковăй пулемет, шултра калибрлă пулемет, радиостанци тата гранатăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Командирсем Печерский, Савельев, Трегубец, Семенов тата Ахунов юлташсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) пехота хĕçпăшалĕнчен персе нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши самолетне ӳкернĕ. Çав кунах пĕр подразделенири красноармеецсем противникăн татах та тепĕр истребительне персе антарнă. Парашютсемпе сикнĕ нимĕç летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте красноармеец Садвакасов юлташ çунакан шĕвек тултарнă бутылка пăрахса нимĕçсен танкне вут хыптарнă тата ручной пулеметран персе 25 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем çавăрса илсен те, Садвакасов юлташ хăй йывăр аманиччен çаплах персе тăнă. Гитлерла мерзавецсем аманнă красноармееца тыткăна илнĕ те унран пирĕн часть çинчен сведенисем илме хăтланнă. Темĕн пек тискеррĕн асаплантарнă пулин те, паттăр красноармеец тăшмансене ответ паман. Вара нимĕçсен фашистла палачĕсем аманнă красноармееца танк гусеницисем айне пăрахса таптаттарнă. Совет халăхĕ гитлеровецсен çакă çĕнĕ преступленине манмĕ, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕн, красноармеец Садвакасовăн вилĕмĕшĕн тăшмана тавăрĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем нимĕçсен икĕ наблюдательнăй пунктне, темиçе пулемечĕпе минометне пĕтерсе тăкнă, противник пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ананьев сержант ертсе пыракан снайперсен отделенийĕ июнь уйăхĕнчи 14 кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 86 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Партизансен О. юлташ командир пулса ертсе пыракан группи, тăшманăн тылĕнче кĕрешекенскер (Брянск фрончĕ), чугунçулăн икĕ станци хушшинчи çул çине минăсем хурса тухнă. Ирхине минăсем çине нимĕçсен çар эшелонĕ пырса тăрăннă. Вагонсен çĕмрĕкĕсем айĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем 150 çын ытла пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 23-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Вилли Д. çапла каласа панă: «Артиллерирен нумай вăхăт хушши вăйлăн персе тăнă хыççăн вырăссем пирĕн участокра наступление кĕрсе кайрĕç. Совет танкĕсем манăн отделение флангсенчен кайса çавăрса илчĕç. Эпир блиндажсенче пулăшу кĕтсе лараттăмăр. Каç умĕн эпĕ хамăн салтаксемпе разведкăна кайма шут тытрăм. Блиндажран аякра мар эпир вырăссен 3 танкĕ умĕнче нимĕçсен 50 салтакĕ аллисене çĕклесе тăнине куртăмăр. Эпĕ те вара аллăсене çĕклерĕм. Ман отделенири салтаксем те ман пекех турĕç. Тыткăна парăннă салтаксем хушшинче пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш ротăри салтаксем пур».

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Эрих çумĕнче унăн аппăшĕ янă çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Çак çырăва урăх хуларан илнинчен эсĕ тĕлĕнĕн. Эпĕ ачасемпе тăвансем патĕнче пурăнатăп. Англичансем Любека пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç. Эпир телейлĕ-ха—чĕрĕ юлтăмăр, çăннипе пирĕн урамра темиçе çурт кăна сыхланса юлчĕ. Мĕн пулса иртни çинчен эпĕ сана çырса кăтартма та пултараймастăп. Пур çĕрте те çынсем йăнăшни илтĕнетчĕ. Тунтикун вилнисем 1000 çынна яхăн пулнă. Вилнисене халлĕхе пурне те тупайман-ха. Пĕтĕм хулана çулăм ярса илнĕччĕ. Любекра тек ĕнтĕ пĕр урам та çук, шыв та, çутă та, газ та çук. Пур те хуйăха ӳкнĕ. Çакăн пирки татах та мĕн те пулин пулас пулсан, эпир ухмаха еретпĕр».

* * *

Пĕлсе тăракан ушкăнсенче пĕлтернĕ тăрăх, Германире суд чиновникĕсем хушшинче татах чылай çынсене арестленĕ. Берлинра фашистла судьясен чылай пысăк ушкăнне арестленĕ, вĕсене тĕрлĕ хуласенчен столицăна докладпа чĕннĕ пулнă. Арестленисене, вĕсем вăрçа хирĕç тăрăхса калаçакан тата Германия çĕнтерессине ĕненмен элементсем çине çемçен пăхаççĕ, тесе айăпланă.

* * *

Румыни патриочĕсем Дунай çинче Корабия хули патĕнче Германие нефть турттарса каякан баржăна çунтарса янă.

СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Францин Национальнăй Комитечĕн Председателĕпе де Голльпе калаçни çинчен панă КОММЮНИКЕ

Лондонра пулнă чухне Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР посолĕпе А. Е. Богомоловпа пĕрле, Францин Национальнăй Комитечĕн Председателĕпе генерал де Голльпе тата ютçĕршыв ĕçĕсен национальнăй министрĕпе господин Морис Дежанпа калаçу туса ирттернĕ.

Çав калаçу вăхăтĕнче, чĕререн кăмăлланă атмосферăра пулса иртнĕскерĕнче, В. М. Молотов Совет Правительстви Франция ирĕклĕ пуласси тата Европăра Гитлера хирĕç кĕрешекен демократиллĕ аслă державăн вырăнне çĕнĕрен йышăнассине курасшăн пулни çинчен тепĕр хут каласа панă. Франци халăхĕн хирĕç тăрас вăй-хăвачĕ ӳссе пырас ĕçре тата пĕрлешсе кĕрешнĕ çĕре хутшăннипе çĕнтерсе Франци халăхĕн правине çĕнĕрен илсе çирĕплетес ĕçре Францин национальнăй комитечĕ мĕнле вырăнта тăнине В. М. Молотов уйрăмах палăртнă.

Генерал де Голль совет çарĕсемпе халăхĕн геройлăхĕпе хăюлăхне тивĕçлипе мухтанă, çавăн пекех вăрçăра Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ аслă çулпуç И. В. Сталин ертсе пынипе мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тивĕçлĕ хак панă. Вăл Совет Правительстви енчен Национальнăй Комитета ăнланса илсе пулăшу панăшăн В. М. Молотова тав тунă. Пĕрлешнĕ нацисем çĕнтерӳ тăвассишĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешнĕ çĕрте тата малашнехи мирлĕ пурнăçа организацилес ĕçре Совет Союзĕпе Франци халăхĕсем тунă союз пысăк вырăн йышăнса тăнине вăл уйрăмах палăртнă.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

116. **П. Михайлов** — Çĕмĕрле МТС-ĕнчи тракторист. Михайлов юлташ çуракинче урапаллă тракторпа ĕçлесе 15 кун хушшинче планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 96 гектар сухаланă.

117. **В. Л. Курочкин** — Çĕмĕрле МТС-ĕнчи тракторист. Курочкин юлташ 15 кун хушшинче çурхи ĕçсен планне 180 процент тултарнă. Унăн тракторĕ çураки вăхăтĕнче пĕр кăлтăксăр ĕçленĕ.

118. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи **тракторсен бригади** (бригадирĕ **В. В. Чуркин** юлташ). Чуркин юлташăн бригади июнĕн 1-мĕш тĕлне тракторсен çурхи ĕçĕсен планне 217 процент тултарнă. Çураки вăхăтĕнче бригадăн пĕр простой та, нимĕнле çитменлĕх те пулман. Пур ĕçе те лайăх пахалăхпа туса пынă, çав вăхăтрах горючи тата сĕрмелли материалсем перекетлесе пынă. Бригадăра çак трактористсем фронтри пек ĕçленĕ: Федотов юлташ, Т2Г маркăллă тракторпа ĕçлесе, сменăра планра кăтартса панă 5,4 га вырăнне 13-шер гектар сухаланă. Чуркина юлташ июнĕн 1-мĕш тĕлне планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 78 гектар сухаланă, Тарасов юлташ, вăл та планра кăтартса панă 45 гектар вырăнне 71 гектар сухаланă.

119. Андрей Александрович **Хохлов**—Улатăрти махорсовхозри тракторист-комбайнер. Хохлов юлташ çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлесе сменăри нормăна 236 процент тултарса пынă. Пур ĕçсене те лайăх пахалăхпа тунă.

120. Николай Андреевич **Душев** — Улатăрти махорсовхозри тракторист. Душев юлташ çуракинче урапаллă тракторпа ĕçленĕ, производствăллă задание 222 процент тултарса пынă. Пур ĕçсене те лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртнĕ.

121. Иван Степанович **Кузнецов**—Улатăрти махорсовхозри тракторист-комбайнер. Çуракинче Кузнецов юлташ сменăри нормăна 204 процент тултарса пынă. Лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн Кузнецов юлташа темиçе хутчен те премисем панă тата «Мастеру комбайновой уборки» ятлă значок парса наградăланă.

122. Петр Михайлович **Рузанкин** — Улатăрти махорсовхозри старши механик. Вăл ертсе пынипе пур тракторсене те лайăх юсанă, вара тракторсен паркĕ çурхи ĕçсен планне 183 процент тултарнă. Рузанкин юлташ ĕçлемелле чухне вăхăта пăхса тăмасть, кирек хăçан та ĕçleme хатĕр, вăл çамрăк трактористсене нумай пулăшать.

123. Александр Михайлович **Тютькин**—Улатăрти махорсовхозри тракторист. Çуракинче тракторпа ĕçлесе вăл, планра кăтартса панă 54 гектар вырăнне, 186,5 сухаланă. Ĕç пахалăхĕ аван пулнă.

Çĕнтерӳ договорне ырласа

КУКЕÇ, июнĕн 23-мĕш. (**Телефонпа**). Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен, вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесе пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Великобританири Пĕрлешӳллĕ Королевство хушшинче договор тунине тата çав договора СССР Верховный Совечĕ ратификацилленине районри колхозниксемпе колхозницăсем кăмăллăн ырласа кĕтсе илчĕç. Виçĕ хăватлă держава пĕрлĕхлĕ пулни гитлерла Германин вăрă-хурахла çарĕн тискер кайăкла ĕçĕсене кĕске вăхăтрах ĕмĕрлĕхех тĕп туса хурĕ.

«Урожай» колхоз членĕсем СССР Верховный Советĕнче В. М. Молотов тунă доклада вуласа тухнă хыççăн, Совет Союзĕ Великобританипе договор тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе килĕшӳ тунине ырларĕç, нимĕç оккупанчĕсене хăвăртрах пĕтерсе тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва татах та лайăхрах пулăшма пулчĕç.

— Эпир кăçал нихăçанхи пек мар вăйлă тырпул туса илессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатпăр, тырăсене пухса кĕртес ĕçе, суракине епле ăнăçлăн ирттернĕ пекех, пысăк пахалăхпа тума хамăрăн мĕнпур вăя хурăпăр, — терĕç колхозниксем.

Халĕ колхозниксем тырăсене çум курăкĕсенчен тасатас ĕçре хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Ĕçе кашни кунах колхозри ĕçлеме пултаракан çынсем пурте активлăн хутшăнаççĕ. Паянхи куна вĕсем 127 гектар çинчи тырăсене çум курăкĕсенчен тасатнă.

В. М. Молотов юлташ доклачĕ çине ответлесе, колхозниксемпе колхозницăсем «Осоавиахим Чувашии» ятлă самолетсен звенине тума 3000 тенкĕ укçа пухса пачĕç. «Урожай» колхоз хăй пĕрлешӳллĕ фондран 4000 тенкĕ уйăрса пачĕ. Колхоз председателĕ Кузнецов юлташ самолетсен звенине тума 600 тенкĕ укçа пачĕ, унăн примерĕпе Данилов, Игнатьев бригадирсем те 600-шер тенкĕ пачĕç.

Колхоз тепĕр кунах государствăна 1942 çулшăн тырă пама тытăнчĕ, колхозниксемпе колхозницăсем уйхирсенчи ĕçсене пысăк тимлĕхпе тума пуçларĕç.

Т. ЛОГИНОВ.

Молотов юлташăн докладне сӳтсе-явнă хыççăн

СЕНТЕРВАРРИ. Новинскри каткапичке тăвакан заводри рабочисемпе инженерно-технически работниксем пухăва пуçтарăннă. Вĕсем унта Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договора ратификацилесси çинчен В. М. Молотов юлташ СССР Верховный Советĕнче тунă доклада радио тăрăх итлерĕç.

Заводра ĕçлекенсем пурте правительствăн тулашри политикине ырлаççĕ. Цех, смена начальникĕсем, уйрăм стахановецсем туха-туха калаçрĕç.

Часах Европăра иккĕмĕш фронт пуçланмалла текен хыпар савăнтарать. Ун чухне гитлеровецсем Совет Союзĕн вăйне татах та лайăхрах туйĕç. Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договор çĕнтерӳ патнелле ярса пуснă тепĕр утăм пулать. Çĕнтерӳ патне часрах çитес тесен, эпир татах та лайăхрах ĕçлеме тивĕçлĕ. Пирĕн пархатарлă ĕç—фронт валли чи лайăх хĕçпăшал туса парасси,—терĕç тухса калаçакансем.

Çавăнтах рабочисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пулса хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Вĕсем хăйсем хушшинче нормăна тултарайманни пĕр çын та ан пултăр, кулленхи нормăна яланах 150-шар процент тултарса пырар, тесе йышăнчĕç.

Халĕ хăйсен обязательствине пурнăçлас тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ. Рабочисем нумайĕшĕсем нормăна 200 процент таран тултараççĕ. Осипов рабочи юлашки кунсенче нормăна 220 процента çитерекен пулчĕ. Бибиков юлташ 200 процент, Кескирова юлташ 140 процент тултарса ĕçлеççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

Рабочисемпе колхозниксен сăмахĕ

ÇĔМĔРЛЕ, (**Хамăр корр.**). Районри ĕççыннисем Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче тунă договора тата ССР Союзĕпе США килĕшӳ тунине ырлаççĕ.

Чугунçул çинче ĕçлекенсен митингĕнче работница Филиппова юлташ çапла каларĕ:

— 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт уçас пирки пысăк державăсемпе калаçса татăлнине пĕтĕм совет халăхĕ чĕререн ырлать. Иккĕмĕш фронт гитлерла захватчиксене пĕтĕмпех аркатса тăкас вăхăта çывхартать. Эпир кашниех хамăр участоксенче пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыма пулатпăр.

Совет Союзĕ Великобританипе договор, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе килĕшӳ туни çинчен ĕççыннисем хушшинче ăнлантарасси анлăн сарăлчĕ. Пренеш ялсоветне кĕрекен «Майăн 1-мĕшĕ» колхозра ку ыйтупа виçĕ бригадăра калаçусем ирттернĕ.

— Виçĕ пысăк государство гитлерла Германие хирĕç пĕрле вăрçни, иккĕмĕш фронт уçма килĕшни, — тесе каланă Птичкин колхозник, — фашистла ескерсене пĕтĕмпех аркатса тăкас шанчăка çирĕплетет. Анчах çĕнтерӳ хăй тĕллĕн килмест. Тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕн Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе вăйлатас пулать. Колхозра стахановла ĕçлемелле.

Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Июнĕн 23-мĕшĕнче партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен партин хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса пачĕ.

Кăçалхи малтанхи çурçул хушшинче хулари промышленноçăн ĕçĕ чылаях лайăхланнă. Май уйăхĕнче хулари промышленность плана ирттерсе тултарнă. Хула территорине кĕрекен колхозсем пурте çуракине кĕске вăхăт хушшинчех вĕçленĕ.

Çавăнпа пĕрлех Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбиначĕ, хулари промкомбинат, кирпĕч завочĕ тата промысла артелĕсем хăйсен планĕсене май уйăхĕнче тултарайман, июнь уйăхĕнче те вĕсем япăх ĕçлеççĕ. Тир-сăран комбинатĕнче оборудованисемпе 20—30 процент таран кăна усă кураççĕ. Куçса килнĕ предприятисен машинисене пурне те вырнаçтарса çитерсе ĕçе ярасси вăрахăн пулса пырать. Шупашкар пристанĕ навигацие начар хатĕрленнĕ пирки грузсем турттарас плана пурнăçа кĕртсе пыраймасть.

Табак фабрикипе Хĕрлĕ Ялавлă завод рабочисен çĕнĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Анчах 1-мĕш номерлĕ типографи, сăкăр комбиначĕ тата ытти предприятисен руководителĕсем кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Çав предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисем кадрсем хатĕрлес ыйту çине сахал çавăрăнса пăхнă. ФЗО шкулĕсенче вĕренекен ачасемпе тĕрĕс усă курни çук.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва тухнă тата Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă предприятисем нумайĕшĕсем производство планĕсене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Çав вăхăтрах хулара социализмлă ăмăртăва хутшăнман предприятисем те пур-ха. Социализмлă ăмăртăва сарас тĕлĕшпе чылай пуçламĕш парторганизацисем партиллĕ-политикăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Уйрăм парторганизацисем предприятире социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен парти пухăвĕсенче ыйту лартса сӳтсе-явма пачах пăрахнă, производствăра лайăх ĕçлекен рабочисен ĕç опычĕпе ытти рабочисене паллаштарассине начар организациленĕ. Рабочисем йышлă мар цехсенче тата бригадăсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пырасси çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ.

Предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисем администрацисен ĕçĕсене çителĕксĕр контроллесе тăраççĕ, производство ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе çине тăрса тăрăшни сахал.

Прение Поддубко (Хĕрлĕ Ялавлă завод), Наумова (пир-авăр фабрики), Подгорнов (Шупашкар станцин начальникĕ), Полукаров, Валатин (пристань начальникĕ), Никитина (ВКП(б) хула комитечĕ), Чичеткин (табак фабрики), Золотников (хула совечĕн исполкомĕ), Рутман (техно-ткацки фабрика) тата партин хула комитечĕн кадрсен енĕпе ĕçлекен секретарĕ Н. П. Енчиков юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем предприятисен ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен, малашне мĕнле ĕçлемелли çинчен каларĕç, ВКП(б) хула комитечĕн предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисене ытларах пулăшса пыма кирлине кăтартса пачĕç.

Пурте пĕр саслă пулса йышăннă резолюцире партин активĕн пухăвĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес, предприятисенче, колхозсенче, учреждениcенче социализмлă ăмăртăва анлăн сарас, плансене вăхăтра тата ăнăçлăн тултарса пырас тĕлĕшпе парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсене палăртрĕ. Обком пленумĕн решенийĕсене кашни коммунистах ăнлантарса памалла. Кашни коммунистăн пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Обком пленумĕн итогĕсене сӳтсе-яврĕç

ЧКАЛОВСКОЕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Июнĕн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ районри пухура коммунистсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленум итогĕсене сӳтсе-яврĕç.

Докладчик—ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Валеев юлташ—районри рабочисем, колхозниксем тата служащисем çулпуçăн Майăн пĕрремĕшĕнчи приказне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени çинчен, 1942 çулта фашистла ирсĕрсене пĕтĕмпех аркатса тăкма фронтпа тăван çĕршыва пулăшу парас ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсем туни çинчен каласа пачĕ.

— Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем,—терĕ вăл хăйĕн докладĕнче,—хавхаланса ĕçлеççĕ, фронтра çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара пулăшса тăраççĕ. Эпир кăçал çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттертĕмĕр. Тĕштырăсене, техникăллă культурăсене акас, пахча-çимĕç лартас плансене район 100,6 процент тултарчĕ. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшу пама колхозсем 108 гектар тырпул акса хăварчĕç.

Кунпа пĕрлех Валеев юлташ çуракинче пулнă çитменлĕхсене кăтартса пачĕ. «Кзыл Юлдус», «Хĕрлĕ Ялав» тата «Осоавиахим» колхозсенче техникăллă культурăсем акассипе çĕрулми лартас плана пурнăçа кĕртмен. Районри çĕрĕç пайĕ тата хăшпĕр колхозсен руководителĕсемпе пуçламĕш парторганизацисем колхозсем акакан вăрлăхсене тĕрĕслесе пăхман. Çавăн пирки уйрăм колхозсен чылай çĕр лаптăкĕсене тепĕр хут пăсса акма тивнĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн колхозниксем миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илмелли минимума кăтартса паракан постановленине чылай колхозсенче япăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ-ха. Июнĕн 15-мĕш тĕлне 30 ĕçкунĕ туман колхозниксем «Осоавиахим» колхозра 58 çын, вĕсенчен 18-шĕ кăçал пĕр ĕçкунĕлĕх те ĕçлемен. Первомайски «Алга», «Октябрь çуламĕ» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те ĕçе сахал тухакансем чылай пур.

Пуçламĕш парторганизацисем, колхозсен правленийĕсем, ялсовет исполкомĕсем колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе çителĕксĕр кĕрешеççĕ, колхозниксене производствăра ĕçлеме начар организацилеççĕ. Çавăн пирки те ĕнтĕ нумай çĕрте çум çумлас ĕç сӳрĕккĕн пырать. Пĕтĕмпе 13.510 гектар çумламалла пулсан, июнĕн 20-мĕш тĕлне 5.114 гектар кăна çумланă.

Прение 15 çын тухса каларĕç.

Уполнаркомзагра ĕçлекен Седаков юлташ сĕт-çу, çăмарта хатĕрлес ĕç районра кая юлнине палăртса, ку ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса пачĕ. Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Никитина юлташ колхозсем тырпулсене пухса кĕртме çителĕксĕр хатĕрленни çинчен каларĕ. Районри 162 жнейкăран 27-ĕшне кăна юсанă. Утă çулмалли машинăсене юсаса хатĕрлемен. Выльăх витисене юсама тата çĕнĕрен лартма тытăнманпа пĕрех. Никитина юлташ тата уборкăна ирттермелли ĕç планĕсене тĕплĕн тума кирли çинче чарăнса тăчĕ. МТС политотделĕн начальникĕ Шакуров юлташ трактористсем çуракинче мĕнле ĕçлени çинчен, уборкăна ирттерме мĕнле хатĕрленни çинчен каларĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл хăшпĕр колхозсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва халĕ те хутшăнманнине, çакă вăл пуçарулăх çукран килнине, агитациллĕ-массăллă ĕçе çителĕксĕр туса пынин результачĕ пулнине палăртрĕ.

Пуху ВКП(б) Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыма районри ĕççыннисене мобилизацилес енĕпе парти организацийĕсен ĕçне советпа колхоз активĕн ĕçне вăйлатма кирлине палăртса решени йышăнчĕ.

Стахановецсем парти ретне кĕреççĕ

КАНАШ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче çĕршывăн малта пыракан чи лайăх çыннисем хăйсен пурнăçне Ленин—Сталин партийĕпе тачă çыхăнтараççĕ, ВКП(б) ретне кĕреççĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводра кăçал апрель уйăхĕнчен вара парти ретне 24 çын кĕчĕç, вăл шутран ВКП(б) членне—13 çынна, парти членĕн кандидатне 11 çынна илнĕ.

Кандидата илнисенчен 9 çын производствăра ĕçлекенсем. П. Беляковпа О. Козаков мастерсем заводра 1936 çултанпа ĕçлеççĕ. Вĕсем ертсе пыракан участоксем май уйăхĕнче программăна ирттерсе тултарчĕç. Вĕсем социализмлă ăмăртăва организацилесе пыраççĕ, бригадăсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ĕç нормисене 300 процент таран тултарса ĕçлекен стахановец-кровельщиксем В. Хоменко, Н. Чуканов юлташсем ВКП(б) членĕн кандидатне кĕчĕç.

ВКП(б) членне илнисем хушшинче—токарь Бельский, бандажник В. Романов, слесарь Финогенов юлташсем. Вĕсем ĕçре ытти рабочисене пример кăтартса пыраççĕ, нормăсене 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ, социализмлă ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ.

Ленин—Сталин партине парăннине ĕçре кăтартнă инженерсемпе техниксем В. Борисов, С. Пишенин, Баймуратова, Г. Росколова юлташсем парти ретне кĕчĕç

ВКП(б) ретне халĕ кĕрекен юлташсем пурте вĕсем хăйсем çине пысăкрах ответлăх илнине пĕтĕмпех ăнланса çитнĕ. Коммунистсем пулса, вĕсем Тăван çĕршывшăн большевикла ĕçлеме, гитлерла вăрă-хурахсене пĕтĕмпех аркатса тăкас ĕçе пĕтĕм вăй-хала пама хатĕр.

Г. СОРОКИН.

Вагонсем юсакан заводри партбюро секретарĕ.

Вăтам тата туллимар вăтам шкулсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн УСЛОВИЙĔСЕМ

Совет шкулĕсенче вĕренекенсемпе учительсем, пĕлӳ илнипе пĕрлех, тĕрлĕ ĕçсенче активлăн ĕçесе, нимĕç фашисчĕсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

Ялхуçалăхĕнче çурхи ĕçсем пуçланнăранпа çĕршер пин вĕренекенсем колхозсемпе совхозсен уйхирĕсене тухрĕç. Вĕсене унта учительсем ертсе пыраççĕ. Свердловск облаçĕнчи Ирбит районĕнче вĕренекенсемпе учительсем, Рязань облаçĕнчи Кутуковски вăтам шкул тата Джамбул хулинчи (Казах ССР) Октябрь революци ячĕпе тăракан шкул питех те паха ĕç пуçарчĕç. Вĕсем уйхир ĕçĕнче ĕçлесе нумай ĕçкунĕ тума, ĕçленĕ хушăрах колхозсемпе совхозсенче культурăпа массăллă, политикăпа воспитани тата çарпа физкультура ĕçне туса пыма пулса хăйсем çине татăклă обязательствăсем илнĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ вĕренекенсемпе учительсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва татах та çулерех çĕклентерсе ячĕ.

Промышленноçăн металлурги, авиаци, танк тата ытти отраслĕсенче малта пыракан заводсенчи работниксен паха пуçарăвне вĕренекенсемпе учительсем хĕрӳллĕн йышăнса илчĕç, хăйсем ялхуçалăх ĕçĕсенче тăрăшса ĕçлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва тухма кăмăл турĕç.

Свердловск облаçĕнчи Ирбит районĕнче вĕренекенсемпе учительсен, Разянь облаçĕнчи Кутуковски вăтам шкулăн тата Джамбул хулинчи Октябрь революци ячĕпе тăракан шкулăн паха пуçарăвне ырласа, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ вăтам тата туллимар вăтам шкулсен социализмлă ăмăртăвĕн çакăн пек условийĕсене туса çирĕплетнĕ:

1. Ăмăртура çĕнтернĕ тесе çак ĕçсене тунă шкул шутланать:

а) шкул колхозра пысăк пахалăхпа ĕçлет тата ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕ кашни вĕренекенĕн пуçне ытларах ӳкет;

б) шкул совхозра пысăк пахалăхпа ĕçлет, кашни вĕренекен нормăна ытларах тултарать;

в) колхозсемпе совхозсене ĕçлеме кайнă отрядсенче пысăк йĕркелĕх кăтартать; вĕренекенсем хушшинче çирĕп ĕç дисциплини пулать, ачасем режима пăхăнса пыраççĕ, общежитисенче йĕркелĕхпе тасалăх палăрать;

г) шкул ял хушшинчи массăллă, политикăллă, культурăллă, çарпа физкультура ĕçĕсенче активлăн хутшăнать.

2. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса мала тухнă шкулсем ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илеççĕ.

3. Ăмăртура çĕнтерекен шкулсем валли премисем тунă:

Колхозсенче ĕçлекенсене премилеме

Пĕрремĕш премисем—10, кашни—10-шар пин тенкĕ,

иккĕмĕш премисем—10, кашни—5-шер пин тенкĕ,

виççĕмĕш премисем—15, кашни—3-шер пин тенкĕ.

Совхозсенче ĕçлекенсене премилеме

Пĕрремĕш премисем—3, кашни—10-шар пин тенкĕ,

иккĕмĕш премисем—4, кашни—5-шер пин тенкĕ,

виççĕмĕш премисем—5, кашни—3-шер пин тенкĕ.

Премисене шкулсене укçан мар, ун вырăнне спорт инвентарĕсем, шкул оборудованийĕ е физика, химми, биологи тата ытти кабинетсен оборудованийĕ параççĕ. Шкулсем хăйсем мĕн ыйтнине шута илеççĕ.

4. Союзлă республикăсенче ăмăртура çĕнтерекен чи лайăх шкула пама союзлă республикăри комсомолăн Центральный Комитечĕ тата çав Республикăн Çутĕç Халăх Комиссариачĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава хăйсем тăваççĕ.

5. Лайăх учительсене, уйсенче ĕçлекен ачасен отрячĕсен руководителĕсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн грамотипе наградăлаççĕ тата укçан премилеççĕ.

Лайăх ĕçлесе, нумай ĕçкунĕ тунă вăтам тата туллимар вăтам шкулта вĕренекенсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн грамотине параççĕ.

6. Премисене уйри ĕçсем пĕтсен, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пăхса тухса йышăннă хыççăн параççĕ.

Хăш шкулсене, учительсене, вĕренекенсене премилессине комсомолăн, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи органĕсем тăрататççĕ.

7 Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртупа пĕрлех, кашни республикăрах, крайрах, облаçрах шкулпа шкул, отрядпа отряд тата уйрăм вĕренекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

8. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнă шкула Хĕрлĕ ялавпа премие ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн представителĕ парать.

9. Социализмлă ăмăрту мĕнле пыни тата унăн итогĕсем çинчен «Комсомольская правда», «Учительская газета», «Пионерская правда», «Социалистическое земледелие», «Совхозная газета» тата вырăнти хаçатсенче пичетлеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ шкулсенче вĕренекенсемпе учительсене социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче активлăн ĕçлеме чĕнеççĕ.

Юлташсем, вĕренекенсем, учительсем, шкулсен руководителĕсем, комсомолецсемпе пионерсем!

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ эсир кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлесе, Сталин юлташăн приказне пурнăçлама, 1942 çулта нимĕç войскисене тĕппипех пĕтерсе тăкса, совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен тасатма Хĕрлĕ Çара, пĕтĕм совет халăхне пулăшасса шанса тăраççĕ.

2-мĕш номерлĕ шкул ăмăртăва хутшăннă

Шупашкар хулинчи 2-мĕш номерлĕ шкул вăтам тата туллимар вăтам шкулсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвне хутшăннă, хăй çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ.

2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем Росглаввино совхозĕнче ĕçлеççĕ. Совхозăн пахчисемпе сачĕсенчи культурăсене çумласа, шăварса тăрса, кĕркунне тухăçлă çимĕç туса илме пулаççĕ. Кашни вĕренекен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕнче кăтартса панă нормăна ытлашшипех пурнăçлама сăмах панă. Ачасем ĕçленĕ çĕрте хăйсен организованноçне кăтартма йышăннă. Прогул, ĕçе кая юласси пулмалла мар. Ĕç дисциплинине нихăçанхинчен те çирĕп тытмалла, бригадир хушнă ĕçе вăхăтра та лайăх пурнăçламалла.

Çавăн пекех 2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем совхозри рабочисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе туса пырас тĕлĕшпе те хăйсем çине обязательствăсем илнĕ. Вĕсем рабочисене хаçат-журналсем вуласа парас, стена хаçачĕ, боевой листоксем кăларас ĕççене активлăн хутшăнма пулаççĕ.

2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем хăйсен шкулĕ çумĕнчи участока та манмаççĕ. Шкул участокĕнчи тырпула куллен пăхса тăрса çитĕнтерме, кайран хăйсен вăйĕпех пухса кĕме пулаççĕ.

Вĕренекенсем çуллахи вăхăтпа сывлăха çирĕплетес енĕпе те усă курма шутлаççĕ. Вĕсем çарпа физкультура ĕçне лайăхлатма, кашниех БГТО, ГТО значокĕсен нормисене пама йышăннă.

Пионерсемпе шкул ачисем çуллахи вăхăтра пĕр тоннăран кая мар эмель тумалли курăксем пухма сăмах панă.

Шупашкар хулинчи 2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсемпе учительсем Чăваш республикинчи шкулсене пурне те вĕсенчен пример илме, ялхуçалăх ĕçĕсене активлăн хутшăнас тĕлĕшпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнеççĕ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ЧКАЛОВСКОЕ. Июнĕн 21-мĕш тĕлне районри ĕççыннисенчен самолетсен звенине тума 77.236 тенкĕ укçа пухăннă.

Кзыл Чышма ялсоветĕнчи «Маяк» колхоз 8650 тенкĕ, Кив Ахпӳртри «РОКК» колхоз 6.646 тенкĕ, «Звезда» колхоз 5.500 тенкĕ, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 5.000 тенкĕ пухнă.

Колхозниксем «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенона тума 200-шер тенкĕ укçа параççĕ. «Маяк» колхоз председателĕ Минаев 300 тенкĕ, Сабируллин Хибадулла, Гильманов, Гайнуллина колхозниксем 200-шер тенкĕ панă.

Тутарла Сăкăтри «Правда» колхозра 75 çулти П. Сатаров 120 тенкĕ, Чарланов, Мухамедзянов, 70 çулти Сакир Валеев, фронтран аманса килнĕ красноармеец Х. Салихов юлташсем 200-шер тенкĕ панă.

Самолетсен звенине тума укçа пухас ĕç районра вăйлансах пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

Сурăх сĕтне сăвас плана ирттерсе тултарнă

ТАВАЙ. Районри чылай колхозсем, партипе правительство кăтартса панă задание пурнăçласа, сурăх сĕтне суса брынза тума леçсе парас ĕçе лайăх туса пыраççĕ. «Искра Ильича» колхоз сурăх сĕтне план тăрăх 60 литр суса памалла пулсан, паянхи куна 130 литр суса панă. Фермăра ĕçлекен колхозницăсем ку ĕçĕн пысăк пĕлтерĕшне шута илсе ăна тимлĕн туса пыраççĕ.

П. ЕВГРАФОВ,

Райзо заведующийĕ.

Гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă çулталăк тултарнă май Совет Союзне саламлани

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 22-мĕш. (ТАСС). Гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă çулталăк тултарнă май паллă обществăллă деятельсем, наукăпа литература тата искусство представителĕсем ТАСС-ăн Нью-Йоркри отделенине совет халăхĕпе геройла Хĕрлĕ Çара саламласа çырусем янă.

Американ паллă писателĕ Теодор Драйзер хăйĕн саламĕнче çапла çырать:

Вырăс халăхĕ мĕнпур этемлĕхе ырлăх кӳрес тесе улăпла вăй хурса ĕçленĕшĕн, вăл этем пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тĕлĕнмелле çитĕнӳсем тунăшăн, ухмаха ернĕ Гитлер тапăннинчен хăйĕн тăван çĕршывне геройла хӳтĕленĕшĕн вырăс халăхне хам енчен тав тума тивĕçлĕ тесе шутлатăп.

Американ паллă писателĕ Эптон Синклер çапла çырать:

Манăн ĕмĕрти чи телейлĕ хыпарсем — манăн çĕршывпа Англия Совет Союзĕпе пĕрлешни çинчен тата фашистла агрессорсене çĕнтерме сăмах пани çинчен, çавăн пекех çак хăрушла вăрçă хыççăн мирлĕ пурнăç тытса тăрас тата реконструкци туса ирттерес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калакан хыпарсем пулса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи халăхсене вĕсем хăйсен тăван çĕршывне геройла хӳтĕленĕ ятпа ырă сунса саламлатăп.

Нимĕçсен паллă писателĕ Томас Манн янă саламра çапла каланă:

1941 çулти июнĕн 22-мĕш, Совет Союзĕ халăхсен ирĕклĕхĕшĕн çак вăрçа хутшăннă кун, мĕнпур этемлĕхшĕн чи асра тытмалли кун пулса юлать. Вырăссен çарĕпе мĕнпур вырăс халăхĕ хĕрхенӳсĕр те сĕмсĕр агрессора хирĕç хăватлăн та ăнăçлăн тăрса çапăçнинчен тĕлĕнсе хĕпĕртекен ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çынсен савăнăçĕ çумне эпĕ хамăн пĕтĕм чун-чĕрепе пĕрлешетĕп. Эпĕ халь ĕнтĕ ватта сулăннă çын — çутçанталăкран лăпкăн çакна кăна ыйгатăп, çакна кăна кĕтсе илме эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн çулăмланса ĕмĕтленетĕп: çĕнтерӳ çинчен пĕлтерсе мĕнпур чансем çапма тытăнас кун çитиччен тата халăхсем: «Тискер кайăка пĕтерсе тăкнă, тĕнче ирĕклĕ, çĕнĕ пурнăçпа çĕнĕ телей пуçланать» тесе пĕр-пĕрине ыталаса илес кун çитиччен пурăнасчĕ манăн.

Нимĕçсен паллă писателĕ Лион Фейхтвангер çапла çырать:

Хĕрлĕ Çарăн кашни çĕнтерĕвĕ, унăн кашни паттăрла ĕçĕ варварсен вăрçă машинине ишĕлтерсе пырать кăна мар, Совет Союзне хирĕç халиччен мĕнпур тĕнчере пулнă çилĕпе ăмсанулăх пирки пулса тăнă тĕшмĕшлĕхсен хăрушла крепоçне те ишĕлтерет. Хĕрлĕ Çар çак çулталăк хушшинче тунă çитĕнӳсем, Совет Союзне ун çине тапăнса кĕнĕ варварсен çарĕнчен хӳтĕлесе хăварчĕç кăна мар, çавăн пекех тата Совет Союзĕн хăвачĕпе чăн-чăн сăн-сăпачĕ çине пăхма пĕтĕм тĕнчери миллионшар çынсен куçĕсене уçрĕç. Паянхи кун мĕнпур цивилизациллĕ тĕнче Совет Союзĕн ятне юратса та хĕпĕртесе асăнать.

Англи горнякĕсемпе машиностроителĕсем янă телеграмма

Великобритани горнякĕсен федерацийĕ тата машиностроительсен пĕрлешӳллĕ союзĕн национальнăй комитечĕ Лондонран çакăн пек телеграмма янă:

Великобритани горнякĕсен федерацийĕ сире, хамăрăн юлташсене—вырăс горнякĕсене тăванла хĕрӳллĕ салам ярать. Пирĕн хушăри туслăха икĕ çĕршыври горняксен пурнăçпа ĕç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе вăй хурса ĕçлесе тунă. ССР Союзĕнчи горняксем çакна ăна хăйсен ĕçне социализмлă план тăрăх тата стахановла ĕçпе пурнăçа кĕртеççĕ, Великобритани горнякĕсем вара — сăрт-ту промышленноçне лайăхрах организациленипе пурнăçлаççĕ. Пирĕн пурнăçри чи паха япаласене хăратса тăракан пĕтĕмĕшлĕ тăшманпа тĕл пулнă хыççăн халĕ, эпир çĕр кăмрăкĕ кăларассине çĕнтерӳ тăвачченех ӳстерсе пырса сирĕнпе пĕрле кĕрешме сăмах паратпăр.

Эпир çĕнтерӳ тата мир тăвасси мĕнпур этемлĕхĕн интересесемшĕн пирĕн çĕршывсем татах та таччăнрах пĕтĕçнинчен килет.

* * *

Машиностроительсен пĕрлешӳллĕ союзĕн национальнăй комитечĕ, çар промышленноçĕнче ĕçлекен 650 пин рабочие пĕрлештерсе тăраканскер, ССР Союзĕнчи рабочисемпе хресченсене тата геройла Хĕрлĕ Çара тăванла салам ярать.

Национальнăй комитет совет халăхĕ фашизма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте кăтартакан паттăрлăхпа çирĕплĕхрен хăй тĕлĕнсе хĕпĕртени çинчен пĕлтерет. Çав кĕрешӳре эпир хамăрăн пĕрлĕхе тытса пыма, продукци туса кăларассине мĕн вăй çитнĕ таранах ӳстерме тата çĕнтерӳ тунă хыççăн хамăр ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн сирĕнпе пĕрле ĕçлеме сăмах паратпăр. Çав ĕмĕтсене пурнăçа кĕртмесĕр ниепле çирĕп мир те пулма пултараймасть.

(ТАСС).

РУЗВЕЛЬТПА ЧЕРЧИЛЛĔН ПĔРЛЕ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ВАШИНГТОН, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рузвельтпа Черчилль иккĕшĕ пĕрле çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă: «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕ тата Англин премьер-министрĕ, çарăн, флотăн тата авиацин çӳллĕ вырăнти представителĕсемпе пĕрле, июнĕн 19-мĕшĕнче пуçланнă калаçусемпе канашлусене Вашингтонра малалла туса пыраççĕ. Çак калаçусен тĕллевĕ—союзниксен вăйĕсене мĕн май пур таранах тата кĕске вăхăт хушшинче пухса тăшмана хирĕç кĕрешме пĕрлештерсе çитерессипе тата пурнăçа кĕртме пĕркунтарах хатĕрленнĕ ĕçсене пурне те çĕнĕрен пăхса тухса, çав ĕçсене ăста тума кирлĕ, унта тăвас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе калаçса татăлассине пурнăçа кĕртесси, çапла вара пĕрлешӳллĕ çĕршывсен вăй-хăватне тĕреклетесси пулса тăрать. Паллах ĕнтĕ, çав калаçусем мĕнле пулса иртни çинчен тулли отчет туса пама çук, вĕсем пирки официальнăй йĕркепе мар тунă заявленисем сĕмленсе калаçнинчен ытла мар пулма пултараççĕ. Умра тăракан çавтери пысăк задачăсем тĕлĕшпе вĕсене пурнăçа кĕртессипе интересленекен çĕршывсем пурте пĕр-пĕринпе пĕтĕмпех калаçса татăлнă тата килĕшнĕ. Юлашкинчен, çырусем урлă татса пама йывăр уйрăм ĕçсем пирки тĕплĕн калаçса татăлассине, президентпа тата премьер-министрпа канашланă хыççăн, технически экспертсем йĕркелесе çитернĕ».

Берлин лакейĕ Вишире тухса калани

Лаваль Франци рабочийĕсене Гитлер чурисем пулма сутать

ЖЕНЕВА, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ĕнер каçхине, Германие яма рабочисене «тара тытас» кампани пынă май, Лаваль радио тăрăх сăмах тухса каланă. Вăл Гитлер пĕччен пуçпулса тăнине юрас тата хăй Гитлера парăнса тăнине кăтартас шухăшпа каланă хăйĕн сăмахĕнче Франци халăхĕн тăван интересĕсене сутма хатĕр тăнине каласа панă.

Хăй сăмахĕн пуçламĕшĕнче Лаваль «Франция шалти питĕ йывăр ыйтусене татаса памалли пысăк задача умĕнче тăнине» йышăннă, çав ыйтусен шутне вăл чи малтан халăх валли япаласемпе апат-çимĕç тăратас ыйтăва кĕртнĕ.

Франци халăхĕн йывăр пурнăçĕ пирки каласа халăха çав ыйтусем мар интереслентереççĕ, унăн шучĕпе «татах та пысăкрах ыйтусем» пур, тесе питех те иртĕхсе каланă Лаваль. Хăйĕн сăмахĕнче малалла вăл гитлерла «çĕнĕ йĕркере» Францин хăйне валли вырăн тупма кирли çинчен, унăн Германи умĕнче мĕнле майпа шанчăка тухмалли çинчен каласа панă. 1939 çулти вăрçă пуçланнăшăн пĕтĕм ответлăха вăл ним намăсне-мĕнне пĕлмесĕр йăлтах Франци çине йăвантарнă.

Лаваль хальхи вăрçăра Германия çĕнтерӳ тăвассине кĕтни çинчен тата çав çĕнтерĕве тума вăл пур майсемпе те пулăшасси çинчен уççăнах каланă. Вăл гитлерла Германие усă кӳмешкĕн çĕнĕ жертвăсем, çĕнĕ уступкăсем тума чĕннĕ. Германия Францин тыткăна лекнĕ çыннисен пĕр пайне те ирĕке кăларма килĕшменнине астутарса, Лаваль Берлинăн çав решенине тӳрре кăларнă çеç мар, çĕнĕрен çĕршер пин французсене гитлерла каторгăна яма хушнă.

Лаваль хăйĕн сăмахĕнче французсене правительство политикине пурнăçа кĕртме пулăшманшăн хытă ятланă.

Англи авиацийĕ Эмден çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Эмден çине пысăк йышлăн тата ăнçăлăн пырса тапăннă. Ултă самолет хăйсен базисене таврăнман.

Ответлă редакторшăн **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРСОБЕС

просит всех получающих пенсию или пособие, переменивших свое прежнее местожительство, сообщить в Горсобес свой новый адрес не позднее 1 июля 1942 года. Не сообщение адреса приостановит доставку пенсии на дом.

2—1 **ГОРСОБЕС.**

ПОХИЩЕННУЮ

сургучную печать на имя Чувашшвейпромсоюза считать не действительной.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ

на спецработе 17 июня 1942 года. Приметы следующие: кличка — «Мальчик», рыжей масти, на лбу звезда. Знающих просим сообщить по адресу: Чувашская АССР, Чебоксарский район, правлению Передне-Байсубаковского колхоза «КИМ».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99. комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 521 Гор. Чебоксары типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 53 64 п. л.